***Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ,***
***чăваш халăх поэчĕ***

# Натюк ташши

*ССР Союзĕн халăх артисткине*
*Надежда Павловăна*

Пирĕн çамрăк Натюк савăнса,
Çĕнĕ уйăх пекех ялкăшса
Ирпеле Атăл тăрăх утать,
Утнăçем шухăша хăй путать.
Çуркунне… Улмуççи çеçкере,
Ăшă туйăм мĕн чул чĕрере —
Пĕтĕм ырлăх çак çут тĕнчере!
Хумлă Атăл çинче, тӳпере
Ярăнаççĕ чипер акăшсем,
Ярăнаççĕ хитре чĕкеçсем.
Шур хула Атăла ыталать,
Уншăн пирĕн Натюк савăнать:
«Эх, юратнă тăван Шупашкар,
Эс мана вăй-хăват, çунат пар.
Чĕремре ялкăшан ĕмĕт пур —
Ĕмĕрех ман пуласчĕ маттур!..»
Садсенчен шăпчăксем сас пани,
Çăлсенчен юрласа шыв юхни
Çупăрлать-мĕн Натюк чĕрине.
Çĕр ăна парнелет ырлăхне.
Ачаран пурнăçа савнăран
Çĕкленет ĕмĕтпе тӳпене;
Пуç таять-çке Çĕршыв илемне.
«Çут тĕнчемĕр, сана мĕн калам —
Йышăнсамччĕ манран эс салам!
Эх, вĕçесчĕ çӳлте кайăкла,
Эх, ташласчĕ юхса акăшла…»
Хĕр çапла хĕмленсе пуплени,
Çăлтăр пек ялкăшса çĕкленни
Пысăк савнăç кӳрет ашшĕне,
Çирĕп шанăç кӳрет амăшне.
Натюка çĕрĕм-шывăм итлет,
Балерина пулма хал пиллет.
Çак сăваплă сӳнми хăватпа,
Илĕртӳллĕ пуян ташăпа
Ентешĕмĕр Натюк паллашать,
Хăй ăна чунтанах парăнать.
Вальс туслашрĕ линка-линкапа,
Мĕн ырри — вăл йăлтах хамăрпа.
Çамрăксен шухăш-кăмăл тулли —
Натюка Урал, Пермь хули
Тăванла ал парса йышăнать,
Вăл кунта вĕренет, хал пухать.
Кулленех çĕннине ширани,
Балета чунтанах парăнни
Натюка иксĕлми вăй парать,
Уншăн вăл чĕререн савăнать…
Çĕршыври Тĕп театр ăна
Хăйĕн туслă йышне йышăнать.
Çакăнта вăл ĕçченлĕх йăви.
Янăрать тĕрлĕ халăх кĕвви.
Сар пикеçĕм Натюк ташшине,
Акăш пек яранса вĕçнине
Курсанах çĕкленет чун-чĕрем —
Çакă мар-и асамлă илем!
Çамрăк ташăç тăван Мускавра
Ăс-халне кăтартать балетра.
Мĕн калам-ши тата эп сана?
Çавăн пек вăл хальхи самана:
Тăрăш эсĕ, вĕрен, пул ĕçчен,
Çĕршыва хисепле чĕререн —
Уншăн халăх сана тав тăвать,
Юратса ырлăх-сывлăх сунать.
Тӳпере сар хĕвел тĕр тĕрлет,
Таврара ал çупни кĕр кĕрлет —
Пырăр, курăр Çĕршыв пикине,
Пырăр, курăр Натюк ташшине.

*1985 г.*